«Пурăнмалли çурт-йĕр» программа

# Свидетельствăсем илчĕç



Иртнĕ эрне кун район пуçлăхĕн аллинчен 4 çамрăк çемье çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма май паракан каялла тавăрса памалла мар субсидие илме тивĕçнине çирĕплетекен свидетельство илчĕ. Каламалла, федераллă, республика шайĕсенчи тата вырăнти бюджетран уйăрнă пурĕ 2144500 тенкĕ çак çемьесемшĕн – питĕ пысăк пулăшу. Савăнăçлă саманта çамрăксем, паллах, пĕр кун кăна кĕтмен. Халĕ вара вĕсем çак пулăшупа хваттер туяннă чухнехи тăкакăн пĕр пайне саплаштарма е çурт туса пĕтерме усă курма пултараççĕ.

Юрий Александрович каланă тăрăх, «Пурăнмалли çурт-йĕр» федераллă тĕллевлĕ программа ĕçлеме пуçланă чух малтанах патшалăх паракан пулăшупа усă курччăр тесе çамрăксемпе пĕрре мар шантарса, ĕнентерсе калаçма тивнĕ.

Халĕ вара асăннă программăн «Çамрăк çемьесене çурт-йĕрпе тивĕçтересси» пайĕ çулленех пурнăçа кĕрсе пынине кура çамрăксен пуçарулăхĕ самаях сисĕнет. Çурт-йĕр çавăрас ыйту кашни çемьешĕнех яланах чи йывăр ыйтусенчен пĕри пулнă. Çак программăпа усă куракансем вара ку ыйтăва çăмăлтарах татса пама пултараççĕ. Апла пулсан çамрăксен хăйсенех хастар та вăр-вар пулмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: свидетельствăсем илнĕ хыççăн – асăнмалăх сăн ӳкерчĕк.**

Çамрăксен çулталăкĕ

# Çамрăк çемье кунĕ те иртмелле

***Кăçалхи çул – Çамрăксен çулталăкĕ. «Çамрăк» сăмахпа темшĕн куç умне çамрăк çемье мар, ăçта та пулин вĕренекен çамрăк яш-кĕрĕм тухса тăрать. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалист-эксперчĕпе Елена Геннадьевна ЧЕРНОВАПА тĕл пулнă май ыйтăва вара шăпах çамрăк çемьесем пирки пуçартăм.***

**– Елена Геннадьевна, нумай-и пирĕн районта çамрăк çемьесем? Камсем кĕреççĕ вĕсен шутне?**

– Çамрăк çемье шутне арăмĕ те, упăшки те 35 çултан иртменнисене кĕртме палăртнă. Пирĕн районта çакнашкал çемьесем кăçалхи çул пуçламăшĕ тĕлне 1260 ытла пулнă. Ку цифрăна эпир ял тăрăхĕсен администрацийĕсемпе çыхăнса тупса палăртнă. Халĕ ĕнтĕ унтанпа çамрăк çемьесен хисепĕ улшăнчĕ, паллах. Çĕнĕ çемьесем хутшăнаççĕ, шел пулин те, мăшăрсем уйăрлни те çук мар.

Вĕсене тĕрлĕ ушкăнсене уйăрма та пулать. Районти çамрăк çемьесем хушшинче студентсен çемйисем те, нумай ачаллă çемьесем те, ялсенче ĕçлекен çамрăк специалистсен çемйисем те, тулли мар çемьесем тата ытти тĕрлĕ çемьесем те пур.

**– Çамрăк çемьесене, калăпăр, ял тăрăхĕсенче мĕн пĕрлештерсе тăрать? Вĕсен пĕр-пĕринпе тачă çыхăну пур-и?**

– Ял тăрăхĕсенче çамрăк çемьесен клубĕсене йĕркеленĕ. Каламалла, вĕсен ĕçĕхĕлĕ те хăйсем йышăнакан план тăрăх пулса пырать. Уйăхра пĕр хутчен пĕрле пуçтарăнса кулленхи ыйтусене татса пама тăрăшаççĕ унта çӳрекенсем. Пĕр-пĕринпе канашламалли, сĕнӳсем памалли те сахал мар çамрăксен пурнăçĕнче. Ача-пăчана тивĕçлĕ пăхса ӳстерес ыйту ытларах хумхантарать çамрăк çемьесене. Пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвĕ те тĕп ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Çамрăк çемьесем пĕрле пухăнса уявсене те хаваслă ирттереççĕ.

Манăн уйрăмах Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи «Семицветик», Москакасси ял тăрăхĕнчи «Родной дом», Мăн Сĕнтĕрти «Лад да любовь» тата районти диагностикăпа консультаци центрĕ çумĕнчи «Родничок» клубсем тăрăшса, интереслĕнсе ĕçленине палăртас килет. Ыттисен те туртăнмалла. Ахаль те пурнăçĕ йывăр тетпĕр те, пĕрле пуçтарăнса йывăрлăхсене çĕнтерме вĕренмелле. Курса калаçмаллах пĕрпĕринпе.

Акă сентябрĕн 30-мĕшĕнче республикипех Çамрăк çемье кунне ирттерме палăртнă.

**– Çакăн пирки тĕплĕнрех каласа хăварсан аван пулмалла.**

– Çак уява ирттересси ЧР Министрсен Кабинечĕ республикăра Çамрăксен çулталăкне ирттерме палăртнă планпа килĕшсе тăрать. Районта та Çамрăк çемье кунне тивĕçлĕ шайра ирттерме тĕрлĕ мероприятисем планланă. Хăшĕ-пĕрин çинче тĕплĕнрех чарăнса тăма пултаратăп.

Акă, сăмахран, сентябрь–октябрь уйăхĕсенче кашни ял тăрăхĕнчех «Çемье хушма хуçалăхĕ» конкурс иртет. Тыр-пул уявĕнче те çамрăк çемьесем хăйсем туса илнĕ тухăça курава вырнаçтарсан питĕ кăмăллă пулмалла тесе шутлатăп. Мĕнрен кая-ха çамрăксем хуçалăхсемпе шкулсенчен?

«Эпĕ тата манăн çемье» конкурса вара ача сачĕсенче ирттерме сĕнтĕмĕр. Ашшĕ-амăшĕ пулăшнипе ачасем хăйсен çемйи çинчен электронлă презентаци хатĕрлеççĕ, ун тăрăх çемье çинчен каласа кăтартаççĕ.

Кунсăр пуçне сентябрĕн 30-мĕшĕнче районти çамрăк çемьесен конференцине ирттерме шутларăмăр. Çурт-йĕр



ыйтăвĕсемпе сĕнӳ-канаш парас тĕллевпех унта тĕрлĕ сферăсенчи специалистсене йыхравлатпăр.

Тепĕр самант пирки те асăнса хăварас килет. «Единая Россия» партин çамрăк гвардийĕ те хăйсен пуçарулăхĕпе районти больницăсенчен ача çуратмалли уйрăмсене парнесемпе кайма хатĕрленет.

**– Эсир каланă тăрăх, уяв интереслĕ иртмелле.**

– Кашни мероприятиех усăллă та интереслĕ ирттерес тесех тăрăшатпăр. Анчах та çамрăксене хăйсене те хастар, пуçаруллă пулма ыйтсах калас килет. Паянхи пурнăça та, малашлăха та хамăрăнах йĕркелемелле вĕт-ха. Тăрăшуллăрах пуласчĕ пурин те.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

Спорт

## Олимп чемпионкин парнисемшĕн

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче районта пысăк спорт уявĕ иртет. Муркашри стадионта 11 сехетре çăмăл атлетика енĕпе Олимп чемпионкин Валентина Егорован парнисене çĕнсе илессишĕн ăмăртусем пулаççĕ. Унта ял хуçалăх предприятийĕсен, организацисемпе учреждениесен, ял тăрăхĕсен тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен командисем вăй виçеççĕ.

Çак ăмăртусене Пĕтĕм Раççейри «Наци кросĕ – 2009» чупу кунне халалланă. Вăл кăçалхипе улттăмĕш хут иртет ĕнтĕ.

## Республикăра – виççĕмĕш

Иртнĕ шăмат кун «Советская Чувашия» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетика эстфети иртрĕ. Ăна кăçал А.Г. Николаев летчик-космонавт çуралнă куна халалланă.

Пирĕн районтан çак ăмăртусене пурĕ 6 команда хутшăнчĕ: Калайкассинчи вăтам, Шурчари тата Сыпайри тĕп шкулсем, Муркаш район администрацийĕн, «Муркашри чăх-чĕп фабрики» патшалăх унитарлă предприятин тата районăн пĕрлештернĕ команди. Калайкассинчи вăтам шкул команди республикăри вăтам шкулсем хушшинче 3-мĕш вырăна тухма пултарчĕ.


**Вăкăрсем, пăрусем, сурăхсем туянатпăр.**
**Тел.: 8-903-063-07-57.**

**В связи с расширением зоны обслуживания филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» принимает на работу по специальности «слесарь по эксплуатации и ремонту газового оборудования» (желательно специалисты с высшим, среднеспециальным техническим образованием). Обращаться по тел.: 60-2-27. 1-3.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера, столы, скамейки банные. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-5.**

**Продаю автомашину ВАЗ-2106 2000 года выпуска, цвет бордовый, на ходу. Цена договорная.**
**Тел.: 8-906-387-92-69, 8-960-301-93-80.**

**Ноябрь уйăхĕнче тăваттăмĕш пăру тăвакан хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Шетмĕпуç ял администраци тăрăхĕнчен. Ыйтса пĕлмелли тел.: 8-909-301-46-58.**

**СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ**
**Цена с установкой от 4000 руб.**
**Тел.: 8-906-385-29-30, 8-960-302--30-52. 2-6.**


## Сергей Михайлович ВАНЮКОВ



2009 çулхи сентябрĕн 14-мĕшĕнче нумай çул хушши Мăн Сĕнтĕрти больницăра ĕçленĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ Сергей Михайлович Ванюков вилсе кайрĕ. Ырă кăмăлĕпе, ĕçе чунтан парăннипе, çынсене яланах пулăшма хатĕр пулнипе палăрса тăнă вăл.

Сергей Михайлович Воронеж облаçĕнчи Грибановски районĕнчи Грибановка салинче 1936 çулхи сентябрĕн 17-мĕшĕнче çуралнă. Сывлăх сыхлавĕн министерствин направленийĕпе Волгоградри медицина институтне ăнăçлă вĕренсе пĕтернĕ чи пултаруллă врачсемпе пĕрле ăна Чăваш Ене ĕçлеме яраççĕ. Çапла Сергей Михайлович Мăн Сĕнтĕр больницинче инфекци чирĕсемпе кĕрешекен тухтăрта вăй хума пуçланă. Пултаруллă тухтăра тепĕр çултанах хирурга куçараççĕ. 1966 çултанпа вара вăл гинеколог пулса тăрăшать.

Çĕр-çĕр çынна пулăшнă Сергей Михайлович Мăн Сĕнтĕрте ĕçленĕ вăхăтра. Районта çав вăхăтра гинекологĕ те вăл çеç пулнă. Муркаша та, Турайне те, Ювановăна та çитсе ĕлкĕрнĕ Сергей Михайлович. Кунсăр пуçне вăл вăхăтра Нискассинче тата Ильинкăра та ача çуратмалли çуртсем пулнă. Кашни вырăнтах ĕçе яланах тĕплĕн, тимлĕн пурнăçланă вăл.

1976 çулта унăн пархатарлă ĕçне хакласа «Хисеп палли» орден парса чысласçĕ. 1981 çулта вара «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ» ят илме тивĕçет пултаруллă хирург, гинеколог.

Юлашки çулсенче вăл Мăн Сĕнтĕрти больницăра рентгенолог пулса вăй хунă. 2004 çулта Сергей Михайлович, ĕçлеме пăрахнă пулин те, ăна больницăна рентген ӳкерчĕкĕсене вулама чĕнни те пĕрре мар пулнă.

Виçĕмçул Сергей Михайлович Ванюкова районти Хисеп кĕнекине кĕртрĕç. Вăл – районăн хисеплĕ çынни.

Сергей Михайлович пурнăçран вăхăтсăр уйрăлса кайни çывăх çыннисемпе ĕçтешĕсемшĕн, юлташĕсемшĕн питĕ пысăк çухату. С.М. Ванюковăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн чĕресенче упранĕ.

**Чĕререн хурланса: Ю.А. Иванов, В.К. Ананьев, А.Е. Андреева, В.Г. Никитин, И.В. Николаев, Г.П. Мазиков, В.С. Краснов, М.В. Виноградова, В.Г. Данилов, Л.И. Самушков, Е.М. Александрова, Н.П. Петрова, В.А. Прокопьев, Л.П. Майкова, Л.Г. Ильгечкин.**


**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ.**
**Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40. 24-40.**

**Продаю семена шестирядного ячменя. Новый сорт. Тел.: 8-927-865-12-44.**




**с. Моргауши, ул. Мира, 9 А (здание редакции), 2 этаж.**




**Предприниматель Еропанов Н.В. продает компьютеры по оптовым ценам. Предоставляет льготный кредит по Президентской программе «Компьютер - в каждый дом». Устанавливает спутниковые антенны «Триколор». Тел.: 62930, 89520236034, 89176519222 рядом с санэпидстанцией. 2-3.**


Участник долевой собственности **Ананьев Алексей Аркадьевич, 29.03.1978 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Маршака, д. 10, кв. 60**, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, на территории землепользования **СХПК им. Мичурина**, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 2,46 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Ананьеву Алексею Аркадьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Маршака, д. 10, кв. 60.

Муркашри тĕп больница коллективĕпе профсоюз комитечĕ иккĕмĕш номерлĕ райбольницăра нумай вăхăт хушши акушер-гинеколог пулса ĕçленĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ, ĕç ветеранĕ, «Хисеп палли» ордена тивĕçнĕ

**Сергей Михайлович**
**ВАНЮКОВ**

вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Администрация и коллектив Моргаушской райбольницы № 2 выражают глубокое соболезнование родным и близким по поводу смерти после продолжительной болезни заслуженного врача Чувашской Республики

**ВАНЮКОВА**
**Сергея Михайловича.**


Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

За главного редактора В.Л. Шапошников.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38. Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 15.09.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3800.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.